Пăртас территори пайĕ

# ПАЯНХИ ЯЛ

#регпроекты #нацпроекты

Пăртас территори пайне 6 ял кĕрет – Пăртас, Волонтер, Вăрман Шăхаль, Кĕперлĕ Кӳлхĕрри, Пĕнер Айкăш, Çарăклă

*Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет*

## Ял илемĕ унта çамрăксем тĕпленнинчен килет

**Тата ялти пуçлăхсенчен. Сăмах хамăр округри 304 çулти Пăртас ялĕ çинчен пырĕ. «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата вулакансем астăваççĕ пуль, пĕлтĕрхи ака тата çу уйăхĕсенчи хаçатăн 29–31, 34–35 тата 37-мĕш номерĕсенче «Пăртас историйĕнчен» рубрикăра архив документчĕсем тăрăх «Асăнмалăх йĕр хăварнă пуçлăхсем» статья тухнăччĕ. Унта юлашки 105 çулта влаç тытăмне 60 çын, 124 çул каялла уçăлнă шкула паянччен 16 директор ертсе пыни тата 74 çул колхоз тилхепине туртнă ертӳçĕсем 18-а çитни çинчен çырнăччĕ. Вĕсем кашниех пултарулăхне кура хăйне май ят хăварнă. Халăх паян кун та вĕсене ырăпа асăнать.**

Акă, вĕсем чи сӳнмен ят хăварнисем: 1929 çулта колхоз йĕркеленĕ, çав вăхăтрах 1932 çултанпа ял ĕçтăвкомĕн председателĕ те пулнă, 1934 çулта кулаксен аллинчен вилнĕ Гордей Кириллович Пылин; яла 1950 çулта парти чĕнĕвĕпе 25 пин коммунист-ертӳçĕ шучĕпе килнĕ, виçĕ ялăн пĕчĕк хуçалăхĕсене пĕрлештерсе Калинин ячĕллĕ колхоз туса хунă, 1957 çулччен ертсе пырса ял пурнăçне нумай çĕнĕлĕх кĕртнĕ Гавриил Кузьмич Храмов; колхоза 1959–1976 çулсенче ертсе пынă, ăна аталантарса республика шайĕнче малтисен ретне хăпартма пултарнă Александр Иванович Грибов председательсем.

1951–1963 çулсенче ертсе пынă, сапаланчăк кивĕ вĕренӳ çурчĕсене пĕр çĕре пуçтарса çĕнетнĕ, хыççăн 8 çул вĕренмелли шкул уçнă, тавралла тирексем лартнă, юнашар пысăк та илемлĕ сад чĕртнĕ Алексей Филиппович Смолинпа шкула вăтам пĕлӳ паракан вĕрентӳ заведенийĕ тунă, учительсем валли пурăнмалли икĕ хутлă çурт лартса çĕнĕ виçĕ хутлă шкул тума пуçланă Петр Иванович Щукин (1963–1976 çулсем) директорсем.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнисене асăнса палăк лартнă, ялта электрификаци ĕçĕсене пурнăçланă Виктор Андреевич Андреев (1962–1969 çулсем), почтăпа ял Советне тата колхоз правленине Çарăклăпа Волонтертан Пăртаса куçарса Мичурин ячĕллĕ хуçалăхăн тĕп усадьби туса хунă, масар çинче ритуал площадки тутарнă, колхоз гаражĕ патне çити асфальт сартарнă тата Çарăклăна каякан çула хăпартнă 1989–1990 çулсенче ял Совечĕн, 1997–1998 çулсенче ял администраци пуçлăхĕнче, 1992–1993-мĕшĕсенче колхоз председателĕнче вăй хунă хастар çамрăк Николай Сергеев тата ял хушшинчи çулсене йĕркене кĕртсе çăмăл автомашинăсем чупма юрăхлă тунă, пĕвесене тасаттарса пушар дружини йĕркеленĕ, ялăн çуралнă кунне паллă тăвассине пуçласа янă, республика шайĕнчи пуçлăхсене Пăртасра клуб кирлине çине тăрса ĕнентерме пултарнă администраци пуçлăхĕ Геннадий Петров (2005–2015 çулсем).

2015 çултанпа ĕçлекен Николай Петров та хăйĕн умĕнхи ертӳçĕ пуçланă ĕçе ăнăçлăн тăсса кĕске вăхăтрах çĕнĕ клуб лартса хута яма пултарчĕ, урамсенчи çул юсавлахĕпе те тимлерĕ, геральдика ыйтăвĕсене пурнăçларĕ, ял историйĕнчи паллă çынсене хисеплессине тĕпе хурса вĕсен ячĕпе лартнă палăксен шутне стелăпа пĕрле пиллĕке çитерчĕ. Республика грантне çĕнсе илсе ялăн тĕп урамне асфальт сарнă тротуар хуртарчĕ, Клубная урам пуçламăшĕнчи мемориал комплексне çĕнетрĕ. Ĕмĕтĕнче тата пысăкрах плансем пурри çинчен те асăнать. Палăртнине пурнăçлама май тупсан ял халăхĕ, уйрăмах ватăсем, питĕ кăмăллă пулĕç.



Клуб территорине тасатаççĕ. Н.Петров – сулахайри.

**Николай ПЕТРОВ, Пăртас территори пайĕн пуçлăхĕ:**

– Пăртас тăрăхĕ халăхĕ пĕр шухăшлă пулнипе, ял аталанăвĕшĕн тăрăшнипе юлашки çулсенче палăрмаллах улшăнчĕ. Патшалăх программисене, наци проекчĕсене пула ял территорийĕнче пысăк ĕçсем пурнăçланчĕç.

Чи пĕлтерĕшлĕ ĕçсенчен пĕри – «Культура» наци проекчĕпе çĕкленнĕ çĕнĕ клуб. Вăл Пăртасра пурăнакансемшĕн чăннипех те пысăк парне вырăнне пулчĕ. Кунта халĕ тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ.

Вырăнти çулсем тимлĕхрех. Юлашки çулсенче май килнĕ таран вĕсене юсама, çĕнетме тăрăшрăмăр. Ку ĕçсене патшалăхăн пуçаруллă бюджет программипе, çул-йĕр фончĕн укçи-тенкипе пурнăçларăмăр. Çапла майпа Пăртасри 50 лет Чувашии, Лесная, Г.Пылинпа Урожайная, Клубная, Советская, Заречная, Полевая, Садовая, Московская урамсен пайĕсем хăтлăланчĕç. Вĕсене вак чул сарса хытарнă.

Пуçаруллă бюджет программипех Пĕнер Айкăшри пĕвене тасатрăмăр. Кĕперлĕ Кӳлхĕрринчи Лесная урамăн пĕр пайне юсарăмăр.

Пĕрлехи ĕç яланах ӳсĕмлĕ. Халăх кар тăрса Пăртасра çĕрĕшнĕ, инкек кăларма пултаракан йывăççене касса майларĕ. Çавăн пекех культура çурчĕ çумĕнчи территорие тасатса тирпейлерĕмĕр, карта тытса çавăртăмăр.

Ял тăрăхĕнче тунă тепĕр пысăк ĕç – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене халалласа лартнă палăк территорине хăтлăх кĕртни. Вăл «Хăтлă хула хутлăхне йĕркелесси» федераллă проектпа пурнăça кĕчĕ. Астăвăм вырăнĕ халĕ кашни килекенех илĕртет. Кунта çулсеренех эпир Аслă Çĕнтерӳ уявĕсене чаплăн паллă тăватпăр, митингсем ирттеретпĕр.

Пăртас ял территори пайĕн аталанăвне тӳпе хывнăшăн Виталий Николаев депутата, культурăпа вĕрентӳ ĕçченĕсене, ял хастарĕсене, старостăсене, ветерансене, ĕçтешсене – пурне те– чĕререн тав тăватăп. Пĕрле эпир вăйлă!

Ялăн тепĕр мухтавлĕ енĕ – унăн çамрăкĕсем. 602 килтен тăракан поселенин 977 çыннинчен 61-шĕ анчахрах çуралнисем, 153-шĕ – ӳссе çитмен ачасем. 326-шĕ – 20 тултарса 45-рен иртмен çамрăксем, е ял халăхĕн 1/3 пайĕ. 50 çула çитменнисем – 66. Калас пулать, вĕсенчен ытларахăшĕ ĕçкĕ-çикĕпе аташмасăр, тӳрĕ кăмăлпа чыслăн çĕрне-кунне пĕлмесĕр вăй хурса ĕçленипе нумай çĕнĕ çурт лартрĕç. Çавна май ялăн сăн-сăпачĕ те палăрмаллах улшăнчĕ. Вĕсенче пурнăç çавăрнă çамрăксем хисеплĕ çынсем шутне кĕчĕç. Çамрăксем 2000 çулсенче лартнă 136 çĕнĕ çуртсем çумне юлашки çулсенче кăна 2–3 хутлă 28 коттеджсем хушăнчĕç. Клубная урамри Л. Зайцев, С.Лаврентьева, Н.Лукина, В.Кумаляков, С.Степанова, Н.Леонтьева пурăнакан хăтлă çурчĕсем тата Н.Ишмейкин, А.Викторов, В.Кириллов, Е.Капитонов çамрăксен икĕ хутлă коттеджĕсем, Лесная урамри Г.Ишмейкин, И.Анисимов, А.Тихонов, Ю.Спиридонов, В.Леонтьев, В.Антонов, Р.Волков, Ю.Никифоров, А.Алексеев, В.Николаеван çирĕп те илемлĕ çурчĕсемпе М.Леонтьев, Н.Артемьев, Г.Орлова, Ю.Шашков, Э.Ефимован икĕ хутлă капмар коттеджĕсем, Советски урамĕнчи А.Ласков, А.Антонов, О.Егоров, В.Иванов, В.Антонов, Н.Иванов, С.Семенов, П.Алексеев, В.Уткин, Л. Матвеева, А.Митрофанов, С.Долгов, В.Ефимов, З.Егорова, А.Языкова çурчĕсем те кашни хăйне май капăр. Вĕсем хушшинче С.Журавлев, С.Иванов, В.Ишмейкин, Е.Ефимов коттеджĕсем уйрăммăн палăрса тăраççĕ. Çавăн пекех Г.Матвеева лартнă, хыççăн Украинăран эвакуаци енĕпе куçса килнĕ В.Баранова сутнă икĕ хутлă коттеджĕ мăнаçлă. Çак урамрах кӳршĕлле пурăнакан икĕ каччă Анатолий тата Дима Сергеевсем те çурт-йĕр ыйтăвне çемье çавăриччченех пурнăçласшăн, кăçал иккĕшĕ те стройка ĕçĕсене пуçăнчĕç. Чукун çул çумĕ урамри А.Андреев, Л.Сафарова, Г.Григорьев, С.Алексеев, Ю.Савельев çамрăксен капмар çурчĕсемпе З.Морозова коттеджĕ, 50 лет Чувашии урамри Н.Семенов, И.Александрова, А.Галкин, Е.Капитонов, Е.Иванов, А.Егоров, С.Белован пысăк çурчĕсемпе Н.Афанасьев, Н.Бардасов, Г.Алексеев, А.Тимофееван çĕнĕлле архитектурăпа ăсталанă коттеджĕсем, Заречная урамри А.Журавлев коттеджĕ, Л.Никитин, А.Никитин, Н.Егоров тата пурнăçран ир уйрăлнă Э.Михайловпа В.Егоров çурчĕсем, Г.Пылин ячĕллĕ урамри Л.Кораблева, Г.Никитин, А.Иванов, Н.Порфирьева, С.Шишова, А.Федоров, А.Галкин, Московская урамри А.Ишмейкин, В.Филимонова, А.Митрофанован çĕнĕ çурчĕсемпе, В.Германова, С.Артемьев, А.Гордеев тата Урожайная урамри В.Артемьев коттеджĕсем яла пырса кĕнĕ чухне Йăрар тăвайккинченех мăнаçлăн курăнаççĕ. Комсомольская тăкăрлăкри Ю.Петров, В.Волков, В.Михайлов çамрăксен çурчĕсемпе П.Волковпа В.Никандрован коттеджĕсем ялăн çурçĕр-хĕвеланăç касне илем кӳреççĕ. 20 çĕнĕ килтен тăракан Молодежная, 32 киллĕ Полевая, тата Советски урамĕн 8 киллĕ хĕвеланăç енчи çĕнĕ касĕ те пĕтĕмпех çамрăксенчен тăрать. Çав урамсенчи Ю.Порфирьевпа Е.Степанов коттеджĕсем те ыттисенни пек мар, уйрăмлăхпа палăраççĕ.

Пăртасра çамрăксем кăна мар, аслăрах çулсенчи ветерансем те çурт-йĕре пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Лесная урамри З.Сенькова, Советски урамĕнчи Н.Кузнецова, Л.Алексеев, Р.Афанасьева, Г.Журавлев, О.Архипова, А.Скворцова, А.Григорьева, М.Степанова, У.Андреева, 50 лет Чувашии урамри А.Кумалякова, Е.Николаева, А.Ананьева, Московская урамри Л.Дмитриева, О.Семенова, Чукун çул çумĕ урамри В.Александрова (тен, хăшпĕр çынсен ячĕсене сиктерсе те хăвартăм пулĕ, каçару ыйтатăп) çурчĕсем те ывăлĕ-хĕрĕсемпе кинĕкĕрӳшĕсем асăрхасах тăнăран урам сăн-сăпатне илем кӳреççĕ.

С.Сеньков, С.Кумаляков, З.Галкина, И.Александрова, Т.Гордеева, И.Сидоров, В.Никитин, Л.Яковлева, Л.Журавлева Шупашкарта е Мускавра пурăнаççĕ пулин те тăван ялпа çыхăну татмаççĕ, кану кунĕсене çемйипех ялти çуртĕнче ирттереççĕ, вĕсене юсасах тăраççĕ, пахчаçимĕç ӳстереççĕ, хăшĕсем выльăх-чĕрлĕх усрама та май тупаççĕ.

Ю.Ивановпа А.Леонтьев çемйисем вара хуларан тĕппипех яла куçса Полевая урамра тата Шкул тăкăрлăкĕнче хӳхĕм çурт-йĕр çавăрчĕç. Çамрăксенчен тĕслĕх илсе аякра пурăннă аслăрах çулхисем те яла таврăнма пуçларĕç. Акă, сăмахран, Чукун çул çумĕ урамĕнчи В.Михайлов чылай çул каялла Çурçĕрти Лабытнанги хулинчен яла килчĕ, тĕп хулара пурăннă Г.Чекушкина та Пăртаса куçнă хыççăн ял çыннисемшĕн хисеплĕ çын пулса тăчĕ. Советски урамĕнчи Г.Кораблев хула пурнăçне Пăртаспа ылмаштарчĕ, Санкт-Петербургра пурăннă З.Гончарова та Пăртаса таврăнса Заречная урамра çĕнĕ çурт лартрĕ.

Çавăн пекех Украинăри Донбасран куçса килнĕ В.Баранов çемйи те Пăртасра çĕнĕрен пурнăç çавăрчĕ, ял халăхĕпе те пĕр чĕлхе тупрĕ, хресчен ĕçне пуçăнса майракаллă шултра выльăхсемпе хуркăвакал ĕрчетме, патшалăха кашни кун 100 литр таран сĕт сутма пуçларĕ.

С. Лукина фермер хуçалăхĕ те ырă тĕслĕх кăтартать, нумай пуç вырнаçтарнă ĕне ферми тытнисĕр пуçне унăн çемйи халăхран сĕт пуçтарас ĕçе те йĕркеленĕ. Н.Афанасьев, Н.Ишмейкин, А.Антонов çамрăксем колхоз саланнă хыççăн усă курман çĕрсене хăйсем çине куçарса тырпул çитĕнтереççĕ.

Калинино райповĕн лавкки кăна мар, М.Мокшина, О.Галкина, Н.Леонтьева çамрăк предпринимательсем те ял халăхне кунсерен кирлĕ таварсемпе тивĕçтерессипе тăрăшаççĕ, çавна май ĕлĕк хулара кăна сутнă тутлă апат-çимĕçе Пăртасрах туянма пулать. Вăт çакăн пек çынсемпе аталанать паянхи Пăртас.

Пĕррехинче Вăрнара кайма такси чĕнме тиврĕ. Ял хушшипе пынă май таксист хăй ăмсаннине пытармасăр: «Лайăх аталанать Пăртас, темиçе хутлă коттеджсем нумаййи куçа илĕртет, ял хушшинчи çулсем те ытти çĕртипе танлаштарсан чылай лайăх, магазинĕсем те тăваттă таран, кафе те пур, сирĕн яла килме кăмăллă», – терĕ. Паллах, çак сăмахсем тăван ялшăн мăнаçлăха вăйлатакан туйăма, çӳлте асăннă çамрăксене тав сăмахĕ калас шухăша вăратрĕç.

**Геннадий ИВАНОВ**



Пăртасри Московская урам.



Ял варринчи çĕнĕ тротуар.



37 çулти Н.Афанасьевăн çурчĕ.



33 çулти С.Ивановăн коттеджĕ.